Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

128 (8965) № ✵ 2004 çулхи ноябрĕн (чӳк уйăхĕн) 3-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

❂ Республика хыпарĕсем

## ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ПУÇЛĂХĔН КУНĔ

**Шупашкарти «Элара» предприятире Хăй тытăмлăх пуçлăхĕн кунĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен Президенчĕ Н.Федоров, Правительство председателĕ С.Гапликов, Президент Администрацийĕн ертӳçи П.Краснов хутшăннă.**

**«Паян Чăваш Енĕн тĕнче шайĕнчи технологисене аталантармалли майсем пур,- тенĕ тĕл пулура Н.Федоров Президент.- Анчах кашни предприятин çивĕч конкуренцие хатĕр пулмалла. Çапла пулсан çеç вăл çитĕнӳ тума пултарасса шанма май пур». Хăй тытăмлăх пуçлăхĕсен умĕнче финанс министрĕ Н.Смирнов сăмах илнĕ. Чăваш Ен бюджетран вăтам вăхăтлăх укçа уйăрмалли системăна тĕрĕслесе пăхмалли пилот регионĕсенчен пĕри пулнине палăртнă.**

**Çитес çул Чăваш Еншĕн - Парксемпе садсен çулĕ. Вырăнти хăй тытăмлăхăн хăш-пĕр пуçлăхĕн шучĕпе, вырăнти специалистсене - архитекторсене, ландшафт дизайнерĕсене - вĕрентессине йĕркелемелле. Çак сĕнӳпе Н.Федоров та килĕшнĕ, вăл пахалăха тĕпе хумаллине, тухăçлăрах ĕçлемеллине асăннă.**

**П.ВАСИЛЬЕВ.**

## ЧИ ЛАЙĂХХИСЕН ШУТĔНЧЕ - ПИРĔН ТЕ

**Строительство комплексне кĕрекен предприятисем хушшинче Раççейре иртгернĕ конкурсра пирĕн республикăри виçĕ предприяти лайăххисен шутне кĕнĕ. Çакăн пирки пĕлтернĕ Строительство тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх федераци агентствипе Строительствăпа промышленноçра ĕçлекенсен Раççей союзĕпе профсоюзĕсем.**

**Ăмăртура палăрма пултарнă 150 предприяти шутĕнче: «Стройтрест-2» акционерсен хупă, «3-мĕш номерлĕ стройтрест» тата «Дорисс» акционерсен уçă обществисем.**

**В.ЭВЕРККИ.**

## ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ

**Кăçалхи тăхăр уйăхра районти ял хуçалăх предприятийĕсене тĕрлĕ бюджетран 8450 пин тенкĕ укçа тивĕçнĕ. Çак сумма пĕлтĕрхинчен 1,5 хут нумайтарах. Асăннă укçа-тенкĕрен чи нумайӑи, пурĕ 7943 пин, республика хыснинчен килнĕ. Тавăрса памалла мар тупрана миллионшар тенкĕ ытла икĕ предприяти: «ЧувашАгроМаркет» акционерсен хупă обществипе «Сад» фирма» ООО - илнĕ. Асăннă укçана вĕсем тĕллевлĕ программăсем тăрăх тивĕçме пултарнă. «Атлашевский», Свердлов ячĕллĕ, «Ольдеевская», «Приволжское» хуçалăхсене çуршар миллион ытла лекнĕ.**

Ăратлă выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлекен предприятисене 1310 пин тенкĕ тивĕçнĕ. Асăннă тапхăрта «Чебоксарская кайăк-кĕшĕк фабрики» 500 пин штук ытла ăратлă чăх çăмарти туяннă, «Чăваш бройлерĕ» акционерсен уçă обществи 31 пин штук ытла ăратлă чĕп илнĕ. «Сад» фирма, «Пучах» ЯПК, «Приволжское» ФПУП, Ленин ячĕллĕ ЯХПК ăратлă выльăх туяннă.

Улми улмуççинчен аякка ӳкмест тетпĕр пулсан, паха вăрлăх тухăç никĕсĕнчен пĕри пулнине шута илмеллех. Çур аки валли предприятисем элитăллă пĕрчĕллĕ культура вăрлăхне 162 тонна туяннă, выльăх апачĕллĕх пăрçа йышши культурăсенне - 33,5 тонна, çĕр улмие - 125,7 тонна. Уйрăм предприятисенчен «ЧувашАгроМаркет», «Сад», Ленин ячĕллĕ, Свердлов ячĕллĕ тата «Атлашевский» хуçалăхсене палăртмалла. Вĕсем вăрлăха çĕнетессипе çине тăраççĕ.

Ӳсен-тăрансене хӳтĕлемелли препарат туяннисене те бюджетран субсидилеççĕ. Куншăн 263,3 пин тенкĕ уйăрнă. Лайăх ĕçленисенчен Тутаркассисене, Кăрмăшсене, Хыркассисене («ЧувашАгроМаркет») асăнма пулать. Район та айккинче юлман. Вăл хысна шучĕпе 300 пин тенкĕлĕх «Ковбой» гербицид туяннă. Асăннă препарата хуçалăхсене валеççе панă.

Тăпра пулăхлăхне ӳстерес тĕллевпе кашни çулах районта кали, ашкар çăнăхĕ, фосфор сапаççĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра вăл енĕпе 2272,3 пин тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă.

Ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн кăçалхи çĕнĕ тĕрев вăл - минераллă удобрени туяннин пĕр пайне республика бюджетĕнчен саплаштарни. Субсиди илме документсене 1330 пин тенкĕ ытлалăх тăратнинчен тăхăр уйăхра 1045 пинĕ килнĕ.

**В.ИВАНОВА.**

## ĔÇНЕ КУРА ХИСЕПĔ

**Ĕçне кура хисепĕ тетпĕр те, тăрăшулăха кура хаклани çынна хавхалантарать. Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе районта иртгернĕ уявра чылайăн тĕрлĕ наградăпа парнене тивĕçрĕç. «Атлашевский» кооперативăн Урай Макаçри ферма заведующине И.И.Иванован ĕçне Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе хакларĕç.**

Республикăн грамотисем те пулчĕç. Асăннă ЯХКри Ю.Д.Семенов слесарь-оператор, Ленин ячĕллĕ кооперативри С.А.Викторова тĕп ветврач, «ЧувашАгроМаркет» АХОн тĕп агрономĕ Г.И.Сидоров, «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнчи В.Б.Иванова, вăл вăрлăх енĕпе ĕçлекен агроном, «Ольдеевская» агрофирмăн планпа экономика пайĕн пуçлăхĕ Е.Н.Петрова, «Чăваш бройлерĕ» АУОн рабочийĕ Т.И.Николаева, «Чебоксарская кайăк-кĕшĕк фабрики» тулли мар яваплă обществăн цех пуçлăхĕ В.М.Николаева ЧР Ял хуçалăх министерствин грамотисене тивĕçрĕç.

ЧР Патшалăх Канашĕн грамотипе уявра икĕ çынна палăртрĕç. Асăннă органăн чысне тивĕçнисем - А.И.Соловьевапа В.М.Митрофанов. Альбина Ивановна «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнче тăрăшать, вăл мăйракаллă шултра выльăх комплексĕн пуçлăхĕ. Валерий Митрофанович вара - Ленин ячĕллĕ кооперативри водитель. Хăйсен тĕп тивĕçне пурнăçланипе пĕрлех вĕсем обществăлла ĕçре те хастар. Пĕри Депутатсен райпухăвĕн депутачĕ, тепри - Туçикасси ял старости.

Кулленхи ĕçре тата общество пурнăçĕнче хастаррисене профсоюз комитечĕн грамотисемпе те чысларĕç. «Приволжское» вĕçренӳ хуçалăхĕн тĕп агрономне Н.М.Богданова тата Куйбышев ячĕллĕ кооперативăн трактор бригадин бригадирне Н.М.Михайлова АПКра ĕçлекенсен профсоюз ресдкомĕн Хисеп грамотипе наградăларĕç. Асăннă отраслĕн профсоюз райкомĕн грамоти вара виçĕ çынна тивĕçрĕ.

**В. ТИТОВА.**



**«ЧувашАгроМаркет» акционерсен хупă обществи кăçал япăх мар тăрăшрĕ. Г.Семенов фото ӳкерчĕкĕнче - районти уява пынă предприятин ĕçченĕсен пĕр ушкăнĕ.**

## САЛАМЛАТПĂР

***Куйбышев ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕн пĕрремĕш уй-хир бригадин бригадирне Г.В.КОРОЛЬКОВАНА, «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕн машинăпа сăвакан операторне Л.П.МИХАЙЛОВАНА, «Пучах» колхозăн водительне А.Е.ЕГОРОВА, «Чăваш бройлерĕ» акционерсен уçă обществин котельнăй лаборанткине З.П.ПЕТРОВАНА, Свердлов ячĕллĕ колхозăн тĕп зоотехникне Т.А.НИКОЛАЕВАНА район администрацийĕн Хисеп грамотипе тата хаклă парнепе наградăланă.***

## АТТЕСТАЦИ ИРТТЕРЕÇÇĔ

Иртнĕ эрнере Кӳкеçри 1-мĕш шкулăн акт залне шкул директорĕсен çумĕсем канашлăва пухăннă. Кун йĕркинчи ыйту - вĕрентӳ учрежденийĕсенчи педагогсен аттестацине ирттересси. Канашлура вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ К.В.Фаизова тухса калаçнă, эксперт комиссийĕн членĕсемпе паллаштарнă.

Кăçал аслă категори илме - 24, пĕрремĕшне - 98, иккĕмĕшне 44 заявлени панă. Вĕсем ноябрĕн 3-4-мĕшĕсенче Кӳкеçри лицейре валеологипе, психологипе тата педагогикăпа экзамен тытаççĕ. Декабрьте аттестациленекенсем кашни хăйĕн предмечĕпе пĕлĕвне кăтартĕç.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

## ÇАМРĂКСЕНЕ - ÇĂМĂЛЛĂХ

Çамрăксем - пирĕн пуласлăх. Çавна май патшалăх та юлашки вăхăтра вĕсем пирки тимлесех тăрать - çурт-йĕр туяннă, çавăрнă чухне çăмăллăхсем кӳрет. Акă, кăçалхи 10 уйăхра çеç 849 çамрăк мăшăр Чăваш Республикин бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар субсиди илнĕ. Пĕтĕмĕшле унăн сумми 43,2 миллион тенкĕпе танлашать.

Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, патшалăхăн тавăрса памалла мар субсидийĕн çулталăклăх лимитне Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай районĕсен, Канаш, Çĕмĕрле, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисен администрацийĕсем пĕтĕмĕшле усă курнă. Çав вăхăтрах ку енĕпе начар ĕçлекен администрацисем те пур, вĕсем - Улатăр, Вăрнар, Комсомольски, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Пăрачкав, Тăвай районĕсем. Шел пулин те, пирĕн район администрацийĕ те вĕсен шутнех кĕрет.

**А.СУСМЕТ.**

## ТĔСЛĔХ ПУЛТĂР

**Çĕр çинче, чăнах та, ырă кăмăллă çынсем пĕтмен-ха. Çак эрнери пулăм çакна тепĕр хут çирĕплетрĕ.**

Пурте пĕлетпĕр, юлашки вăхăтра шкулсен библиотекисенче кĕнеке фончĕ хушăнса пымасть. Уйрăмах илемлĕ литература кĕнекисем сахал. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли юлашки виçĕ çулта пĕр çĕнĕ кĕнеке те хушăнман. «Пĕчĕккисем пĕр кĕнеке те вуламанни хăвармарĕç ĕнтĕ»,- шухăшлăн калать вара шкул библиотекарĕ Р.Н.Никитина. Унăн пăшăрханăвне илтнĕ евĕрех савăнмалли те тупăнчĕ. Мăн Маркара пурăнакан Григорий Николаевичпа Лариса Андреевна Васильевсем Мăн Маркари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул библиотекине питĕ нумай кĕнеке парнелерĕç. Мĕн пысăкăш савăнăç пулчĕ ку пирĕншĕн, учительсемпе ачасемшĕн. Рена Николаевна тӳрех курав хатĕрлерĕ. Тем тĕрлĕ кĕнекепе журнал та пур кунта: пуçламăш класра вĕренекенсем валли «Мурзилка», юмах кĕнекисем, арçын ачасене «Юный техник» журналсем. Çавăн пекех чăваш писателĕсен произведенийĕсем: Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», Леонид Агаковăн «Ылтăн вăчăра», Иван Лисаевăн «Пилешĕм, пилеш» романĕсем. Вĕсемпе пĕрлех вырăс çыравçисен хайлавĕсем: Ф.И.Тютчевăн «Стихотворения», Л.Н.Толстойăн «Воскресение» кĕнекисем. Учительсем валли те пур унта. Шутласа та пĕтерес çук.

Манăн хам ятран та, ытти учительсемпе ачасен ятĕнчен те çак ырă çынсене пысăк тав сăмахĕ калас килет. Нумай пурăнăр, ан чирлĕр.

Çак ырă пулăм ыттисемшĕн те тĕслĕх пулса тăтăр.

**Е.ГРИГОРЬЕВА, Мăн Марка.**

**ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!**

**2005 çулхи пĕрремĕш çур çул валли «Тăван Ен» хаçат çырăнтарăвĕ малалла пырать. Ăна почтальонкăсем те, почта уйрăмĕсенче те, унсăр пуçне альтернативлă майпа хаçат редакцийĕнче те çырăнтараççĕ. Хапăл тăватпăр «Тăван Ен» тусĕсен йышне!**

❂ Октябрӗн 30-мӗшӗнче ҫӗршывра политика репрессийӗпе инкек тӳснисене асӑнтӑмӑр

# АЙӐПСӐРРИСЕН ЫРӐ ЯЧӖШӖН

**Хӑй вӑхӑтӗнче рабочисемпе хресченсен влаҫне ҫирӗплететпӗр тесе вӗсене халӑх тӑшманӗсем вырӑнне хурса мал ӗмӗтлӗ, мал курӑмлӑ нумай ҫынна тӗрмене хупнӑ, Ҫӗпӗрти е Ҫурҫӗрти лагерьсене янӑ. Халӗ кун пирки нумай ҫыраҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ те. Эпир вара, прокуратура ӗҫченӗсем, ҫак ӗҫсемпе кашни кун тӗл пулатпӑр. Таса чунлисен ырӑ ятне таврӑратпӑр.**

Республика прокуратуринче ку енӗпе И.Н.Пашева, Шалти ӗҫсен министерствинче И.К.Захаров ӗҫлеҫҫӗ. Район прокуратури вара, тӗпрен илсен, ҫак саккун мӗнле пурнӑҫланса пынине тӗрӗслесе тӑрать. Сӑлтавсӑр айӑпланисен ырӑ ятне таврӑс енӗпе тимлекен комисси, 1992 ҫултанпа ӗҫлеме пуҫланӑскер, иртнӗ тапхӑрта 59 заявлени пӑхса тухнӑ, вӗсенчен 45 ӗҫе кирлӗ пек татса панӑ. Айӑпланнӑ ҫынсен туртса илнӗ пурлӑхне вӗсен ачисене е ҫывӑх тӑванӗсене таврӑрса парас ӗҫре те саккуна пӑсни пулман.

Ҫавӑн пекех район прокуратуринче кӑҫалхи пӗрремӗш кварталта Раҫҫей Федерацийӗн «Политика репрессийӗпе айӑпланнисене реабилитацилесси» саккунӗпе реабилитацилени тата политика репрессине пула инкек тӳснисене ҫӑмӑллӑхсемпе компенсаци парасси мӗнле пурнӑҫланнине те тӗрӗсленӗ. Раҫҫей Федерацийӗн Правительстви «Политика репрессине пула инкек тӳснисемпе реабилитациленӗ ҫынсене ҫӑмӑллӑх парасси» енӗпе кӑҫалхи май уйӑхӗн 5-мӗшӗнче ятарлӑ положени ҫирӗплетнӗ.

Паянхи кун тӗлне районта реабилитацине лекнӗ 36 ҫын тата политика репрессине пула инкек тӳснисем 21 ҫын шутланаҫҫӗ. Реабилитацие лекнӗ ҫынсене ҫӑмӑллӑхсем панӑ чухне саккуна пӑсни пулман темелле. Ҫапах та телефон кӗртесси заявлени панӑ хыҫҫӑн нумай вӑхӑта тӑсӑлнине палӑртнӑ. Ку паллах ялсенчи АТЦсен техника шайӗнчен нумай килет. Хваттер укҫипе коммуналлӑ пулӑшушӑн, ҫул ҫӳревшӗн тата вилнӗ ҫынна пытарнӑшӑн тӳлессине сахаллатнӑ.

Ҫакна та асӑрхаттарса хӑварасшӑн. Районти комиссие компенсаци илме пыракансен реабилитаци лекни ҫинчен паракан справкӑна илнӗ хыҫҫӑн виҫӗ уйӑхран ҫеҫ пымалла.

Шел пулин те, пурӑннӑ пулсан пирӗн ҫӗршыва малалла аталантарма, вӑйлатма сахал мар пултарнӑ ҫак ҫынсен ҫӑмӑллӑхсем пӗчӗк, сисӗмлӗ ҫеҫ. Чи хакли вара - эпир вӗсене манманни, яланах аса илни. Пурӑнаканнисене вара сывлӑх та ӑнӑҫу пултӑр.

**В.ГАВРИЛОВА,**
**район прокурорӗн аслӑ пулӑшаканӗ.**

# ПРИВИВКӐНА МАЛАРАХ ТӐВАСЧӖ

**2003 ҫулта грипп тата ОРВИ чирӗпе 7226 ҫын, вӗсенчен 2796 ача чирленӗ. Ҫакӑ районта пурӑнакансенчен вӑтамран кашни 8-мӗшӗ, ачасенчен кашни 3-мӗшӗ пӗр хутран сахал мар грипп е ОРВИ чирӗсемпе чирлесе ирттернине пӗлтерет.**

Грипӑн А вирусӗпе чирленӗ хыҫҫӑн сыхлӑх вӑйӗ (иммунитет) 1-1,5 ҫултаláк, В вирусӗ хыҫҫӑн 3-4 ҫул ӳт-пӳре сыхланать. Ку чир хӑвӑрт сарӑлса кӗске вӑхӑтрах пысӑк коллективсен ӗҫне чарса лартма пултарать.

**Грипп чирӗнчен сыхланас тӗлӗшпе мӗн сӗнетпӗр-ха?**

Эпидеми пуҫланиччен 1 уйӑх маларах ятарлӑ прививка тӑвассине паян тӗп вырӑна хумалла. Хальхи вакцинӑсен грипп чирӗнчен сыхлакан вӑйӗ ҫителӗклӗ. Районта юлашки 5-7 ҫулсенче шкул тата ача сачӗсенче вӑхӑтра прививка тунипе ҫеҫ нумайӑшне карантина хупассинчен сыхласа хӑварнӑ. Анчах 2003 ҫулта прививка тӑвасси 2002 ҫулхипе танлаштарсан, 2,4 хут чакнӑ. Сӑлтавӗ - Раҫҫей бюджечӗ вакцина уйӑрса паманнинче.

Кӑҫал муниципаллӑ учреждениесенчи ачасемпе вӗсенче ӗҫлекенсене прививка тума укҫа-тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ.

Уйрӑм пысӑк предприяти пуҫлӑхӗсен, уйрӑмах суту-илӳ е халӑх ыйтӑвне тивӗҫтерекен ҫӗрте, ӗҫлекенсене ятарлӑ прививкӑпа вӑхӑтра тивӗҫтерме тӑрӑшмалла. Ку мероприяти экономикӑшӑн та усӑллӑ. Грипп е ОРВИ чирӗсенчен пулӑшакан «Гриппол» вакцина 66-80 тенкӗ тӑрать, ҫакӑ нумай йӳнӗ.

Тӗпчев палӑртнӑ тӑрӑх, прививкӑшӑн пӗтернӗ 1 тенкӗ вӑтамран 25 тенкӗ тупӑш кӳрет.

**Вакцинӑсем мӗнлисем пулаҫҫӗ тата ӑҫта тупма пулать?**

Грипп чирӗнчен сыхлакан вакцинӑсене Мускав тата Чулхула институтчӗсенче хатӗрлеҫҫӗ.

Сӑмсана - тумлатмалли тата уколпа тумалли «Гриппол» вакцина ытларах ҫирӗпленнӗ. Унсӑр пуҫне «Ваксигрипп» (Нидерланды) аптекӑсенче пур.

**Вакцинӑна район аптеки урлӑ туянма пулать.**

Ку ыйтӑва тӗплӗнрех татса пама район больницине 21-4-49, 21-8-38, санитарипе эпидемиологи сӑнав центрӗнче 2-19-06 е 2-18-49 телефонсемпе ыйтса пӗлме пулать.

Грипран сыхланма тӗллев лартнӑ пулсан, ноябрӗн - 20-мӗшӗччен прививкӑсемпе тивӗҫтерсен, усси пысӑкрах, мӗншӗн тесен грипп эпидеми пуҫланиччен ӳт-пӗвӗн сыхлӑх вӑйӗ (иммунитет) аталанса ӗлкӗрет.

**Е.ПЕТРОВА,**
**районти санитарипе эпидемиологи сӑнав центрӗнчи ерекен чирсемпе кӗрешекен врачӗ.**

# ЯЛ ХУҪАЛӐХ ИСТОРИЙӖНЧЕН

**Ял хуҫалӑх пӗрлӗхӗсем 20-мӗш ҫулсенче чӑмӑртанма тытӑннӑ. Кашни ялтах, кашни урамра тенӗ пекех ҫуралнӑ вӗсем. Пурне те районти ҫӗр ӗҫ пайӗ регистрациленӗ. Юлташлӑхсен Уставра ҫырнӑ тӗллевсемпе задачӑсем пулнӑ. Хӑш-пӗр пӗрлешӳсен йышӗ 6-7 ҫынран иртмен. Ҫӗрпе ӗҫлемелли юлташлӑхсем ытларах пулнӑ. Ыттисем вара улмаҫырлапа пахча-ҫимӗҫ лартса ӳстерекенсем, сурӑх ӗрчетекенсем, машинӑсем туянма пӗрлешнисем тата ытти те. Уйрӑм хуҫалӑхсем хӑйсем палӑртнӑ ӗҫе пурнӑҫлас тесе шутламан та.**



1930-мӗш ҫул пуҫламӑшӗнче коллективизаци юхӑмӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланнӑ. Вырӑнти Советсем нумай йышлӑ колхозсемшӗн кӗрешнӗ. Ялсенче 4-5 хуҫалӑхран пӗр пӗрлӗх пӗтӗҫнӗ. Ҫӗнӗ юхӑм, пӗтӗмӗшле илсен, 1934-1935 ҫулсенче вӗҫленнӗ. Самана ыйтнӑ май маларахи истори утӑмӗсем ҫак коллективлӑ хуҫалӑхсен шӑпине тӗпрен улӑштарчӗҫ. Шупашкар районӗ 1935 ҫула колхоз тытӑмӗнче ӗҫлекен 5790 ҫынпа пуҫлать. Ака-суха ҫӗр калӑпӑшӗ 19734 гектар ҫинче вырнаҫнӑ. Ишлей тӑрӑхӗ (ун чух уйрӑм район пулнӑ) 5432 колхоз ӗҫченӗ тӑрӑшса вӑй хунине рапортлать. Вӗсем 19678 гектар ҫинче тыр-пулпа пахча-ҫимӗҫ туса илеҫҫӗ. Коллективлӑ хуҫалӑх кашни ялтах ӗҫленӗ. Тӗслӗхрен, Чаканар ял Советӗнче икӗ колхоз: «Тӗрӗс ҫул» («Верный путь» 1930 ҫулта йӗркеленнӗскер) тата Ырашпулӑхри «Автобус» (1929 ҫулта йӗркеленнӗ). Вӗсенче - 123 колхоз ӗҫченӗ, 53 уйрӑм хуҫалӑх. Пурлӑхӗ вӗсен: 69 лаша, 86 ӗне, 393 сурӑхпа качака, 206 сысна. Ӗҫ хатӗрӗсем: 52 сухапуҫӗ, икшер сеялкӑпа жнейка пулнӑ.

**О.ПАВЛОВА.**
**Сӑн ӳкерчӗк ҫинче Чаканарти «Тӗрӗс ҫул» колхозра клевер акаҫҫӗ. 1930-мӗш ҫ.ҫ.**

❂ Сӑвӑ сӗвеме

**Валери ТУРКАЙ**

### *СУЛХӐН ҪУ ТА ӐШӐ КӖР...*

*Сулхӑн ҫу та ӑшӑ кӗр.*
*Вӗҫленет ҫултаláк.*
*Тумла пек ҫиҫсе илет*
*Талӑк хыҫҫӑн талӑк.*

*Сулхӑн ҫу та ӑшӑ кӗр...*
*Пурнӑҫӑм ман, пурнӑҫ!..*
*Мӗншӗн эп ҫак лӑпкӑ каҫ*
*Тупаймастӑп канӑҫ?*

*Сулхӑн ҫу та ӑшӑ кӗр...*
*Вӑхӑт - тӗпсӗр Авӑр.*
*Ҫамрӑк ӗмӗрӗм иртет...*
*Мӗншӗн?! Капасамӑр!*

*Сулхӑн ҫу та ӑшӑ кӗр.*
*Талӑк... Тепӗр талӑк...*
*Тин пуҫланнӑ Кӗвӗ пек*
*Вӗҫленет ҫултаláк.*

**Кӗл чечек мӗн чухлӗ хитререх,ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах типет.**
**А.МОРУА.**

**Сана юратчӑр тесен - тар.**
**М.МОНРО.**

❂ Ҫӗр - пирӗн пуянлӑх

# ПУЛТАРАЙМАСАН ТАРА ПАР

Ҫӗр ресурсӗсемпе тата ҫӗр йӗркелӳ енӗпе ӗҫлекен пӗрлешӗвӗн районти комитечӗ ял хуҫалӑх предприятийӗсем ҫӗрпе епле усӑ курнине кӑҫал темиҫе хут та тӗрӗслерӗ. Ҫав вӑхӑтра вӑл ял хуҫалӑх тӗллевӗллӗ 24 пин гектара яхӑн ҫӗре пӑхса ҫаврӑннӑ. Саккуна пӑснине 11 хутчен тупса палӑртнӑ. Ку вӑл хуҫалӑхсем хӑйсен ҫӗрӗпе йӗркеллӗ е пачах та усӑ курманнине пӗлтерет. Асӑннӑ ҫитменлӗхе ҫултан ҫул тӑвакансем те пур. Ун пеккисен ертӳҫисен ҫак статьяна вуласа тухсан кӑштах пичӗ хӗрелессе, килес ҫул лайӑхрах усӑ курасса шанас килет.

«Слава» кооперативӑн пине яхӑн ҫӗрӗ ҫум курӑк айӗнче выртрӗ. Ҫавна вӗсем хура ҫӗртме тӑватпӑр тесе отчет панӑ, анчах вӑл лаптӑк ҫинче кӗркуннечен те трактор пырса кӗмерӗ. «1-ое Мая» колхозӑн та 500 гектара яхӑн ҫӗрӗ ҫинче ҫӑвӗпех ҫум курӑк алхасрӗ. Ӑна Иккассине пырса кӗнӗ чухнех асӑрхама пулать. Мӗн акса ӳстернине те вӗсем пурне те пуҫтарса илмен-ха. Колхозӑн урпа вырса илмен вырӑн та пур.

Кӑҫал Кадыков ячӗллӗ кооперативӑн та 600 гектар ытла, «Прогресс» акционерсен хупӑ обществин 400 гектар ытла, «Туруновский» тата «Атӑл» хуҫалӑхсен 700-шер гектар ытла, «Дружба» РПУПӑн 500 гектар ытла, «Сад» фирмӑн 500 гектара яхӑн ҫӗрӗ ҫум курӑк айӗнче ҫу касрӗ. Хура ҫӗртме тӑватпӑр тенӗ пулин те унта сухаламан. Асӑннӑ лаптӑкран чылайӑшӗ паян та хытхура айӗнче. Енчен те асӑннӑ предприятисен ертӳҫисем хӑйсен ҫӗрӗпе йӗркеллӗ усӑ курайманҫҫӗ пулсан вӗсен, тен, пултараканнисене тара парасси пирки шухӑшласа пӑхмалла?..

**А.ТАРАСОВ.**

❂ Аслӑ Ҫӗнтерӳ 60 ҫул тултарас умӗн

## *ТӐВАН ЯЛА ЙӐМӐК ПАТНЕ*

**Эп ҫамрӑк мар, ман ҫук атте-анне те,**
**Вӗсем ӑсаннӑ урӑх тӗнчене.**
**Аса илмесӗр кун иртмест пӗрре те,**
**Пуриншӗн тав тӑватӑп вӗсене.**

**Ҫак хушӑра тӑван ялта пулманччӗ,**
**Мӑшӑрӑмпа хаяль тухрӑм ҫул ҫине.**
**Тыр-пулсенче кӗтмен ҫӗртен сас пачӗ,**
**Ҫак вӑхӑра ҫухалнӑ путене.**

**Эпир ӑна питех те юрататпӑр,**
**Мӗн ачаран саватпӑр сассине.**
**Ҫав сасӑпа киленнӗ май утатпӑр,**
**Тӑван яла, манми йӑмӑк патне.**

**Ман икӗ йӑмӑк, икӗ чун ӑшшийӗ,**
**Ҫуралнӑ, ҫитӗннӗ, пӗр вӑхӑтра.**
**Ҫак пурнӑҫра ҫапла вӑл, ҫын шӑпийӗ -**
**Ялта пӗр йӑмӑк, теприйӗ хулара.**

**Аса илӳ ман чунӑма хускатрӗ,**
**Ачалӑхра ҫӳретӗп шухӑшпа.**
**Эп ҫитӗнсен, мана вӑрҫа ӑсатрӗҫ**
**Йӑмӑкӑмсем «Катюша» юрӑпа.**

**Ял еннелле ҫунатланса вӗҫеҫҫӗ,**
**Пӗр чарӑнмасӑр шухӑш-ӗмӗтсем.**
**Тахҫантанпах, ӗнтӗ, пире кӗтеҫҫӗ**
**Юратнӑ йӑмӑкӑм, тӑванӑмсем.**

**Ф.ИВАНОВ,**
**Янашкасси ялӗ.**

❂ Хамӑръялсем

# ЛЯВА НЕСӖЛӖ

**(Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ иртнӗ номерте.)**

Малашне те панулми, виктори, чие тата хӑмла ҫырли сутса колхоз пысӑк тупӑш илет. Пахча-ҫимӗҫ бригадине ертсе пыма ашшӗнчен вӗренсе пынӑ, унпа пӗрле ӗҫленӗ Марина Афанасьевна пуҫлать. Маттур хӗрарӑм кайран пӗтӗм сад хуҫалӑхне хӑй ҫине илсе пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвать. М.А.Леонтьева (1913 ҫулта ҫуралнӑ) хӑйӗн мӑшӑрӗпе, М.И.Ефремовпа, ашшӗпе пӗрле пурӑннӑ. Вӗсен ывӑлӗн Владимир Леонтьевӑн ҫемйинче Марина Афанасьевнӑна панӑ нумай награда асӑнмалӑх упранать: грамотӑсем, дипломсем, медальсем. Чи пахи вара - Ленин орденӗ.

Ольга Афанасьевна та (1918 ҫулхи) ашшӗ пекех пахча-ҫимӗҫ ӳстерекен ӑста пулнӑ. Хорнсора каччa кайнӑскер, О.А.Лыкова, ҫичӗ ача амӑшӗ, «Атӑл» колхозра купӑста туса илекен бригадӑна ертсе пынӑ, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем туса мухтава тивӗҫнӗ.

Я.М.Леонтьев (Афанасий Михайлович пиччӗшӗ), ача чухнех уксах юлнӑскер, пысӑк ӗҫсенех явӑҫайман. «Мана ҫӑпата пӗтерчӗ»,- текеленӗ вӑл час-часах, килтисем валли пӗрех май ҫӑпата тума тивнине аса илсе. 1911 ҫулта Яков Михайлович ҫемйипе уйрӑлса тухнӑ, колхоза кӗрсен лашапа ӗҫленӗ. Арӑмӗпе, Евлампипе (Алмикасси хӗрӗ пулнӑ), вӗсем пилӗк ача пӑхса ӳстернӗ: Домна, Лиди, Геннади, Лявантти (Леонтий), Васли. Геннадипе Лявантти вӑрҫӑра вилни Яков Михайловича пуҫӗпех ҫапса хуҫнӑ - 1949 ҫулта ҫуркунне вӑл ҫӗре кӗнӗ. Ҫав ҫулах кӗркунне, Афанасий Михайлович та, урисем утайми пулнипе пӗр ҫул вырӑнра выртнӑ хыҫҫӑн, пурнӑҫран уйрӑлнӑ, 70 ҫул та тултарайман.

Я.М.Леонтьев ывӑлӗ Василий Яковлевич (1917-1998 ҫ.ҫ.) Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫа хутшӑннӑ, икӗ ҫул ял совет председателӗнче ӗҫленӗ, 1977 ҫулта пенсие тухиччен 25 ҫул «За коммунизм» колхоза ертсе пынӑ, РСФСР тава тивӗҫлӗ ял хуҫалӑх ӗҫченӗ ята илнӗ. Арӑмӗ, А.Н.Леонтьева, шӳтленӗ пек калас-тӑк «унӑн медальсемпе орденсем кӗтӳпех».

Чӑн та, чаплӑ та сумлӑ йӗр хӑварнӑ Лявасем Ҫӗньял-Покровски ялӗн пурнӑҫӗнче.

**Т.ВЕРЕНДЕЕВА.**

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

## ÇУТ ÇАНТАЛĂК ПУЯНЛĂХНЕ УПРАСЧĔ

**Тавралăха экологи хăрушсăрлăхĕ килсе ан çаптăр тесен чи малтанах хамăрăн пуçарулăхпа тăрăшулăх кирлĕ. Çакна ăнланса районти экологи ĕçĕсен комплекслă программине хатĕрленĕ. Ăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе районти экофонд мĕнле ĕçлесе пынипе унăн пуçлăхĕ Р.В.ДАНИЛОВ паллаштарать.**

- Тавралăха сыхласси, çут çанталăк пуянлăхне упрасси тата ăна хушса пырасси - пĕтĕм халăх ĕçĕ. Çавăнпа та пирĕн фонд ĕçченĕсем çак тĕллеве пурнăçа кĕртме пĕтĕм общественноçа явăçтарассине тĕпе хураççĕ. Акă, Чăваш Республикин Президенчĕн «Парксемпе садсен çулталăкĕ çинчен» Указне пурнăçласа тавралăха симĕслетес ĕçе район, ял-поселок администрацийĕсем тата ытти учреждени активлă хутшăнчĕç, сакăр пине яхăн йывăç-тĕм лартса хăварчĕç.

2002 çулхи январьте йышăннă «Тавралăха сыхласси çинчен» Федераци саккунне ĕçпе çирĕплетессипе те районта чылай ĕç йĕркелесе ирттернĕ. Ăна валли кăçалхи тăхăр уйăхра федераци, республика, вырăнти бюджетсенчен тата предприятисенчен уйăрнă 11 миллион тенкĕ укçа хывнă.

Пирĕн район юхан шывсемпе пуян, пĕтĕмĕшле вĕсен тăршшĕ 2,2 пин çухрăмпа танлашать. Чи пысăккисем - Йăршу (42 км), Ункă (38 км), район чиккинчи Кăкшăм (36 км) тата Çавал (31 км). Вĕсене тата ытти пĕвекӳлĕне таса та тирпейлĕ тытассипе тăрăшмалла. Йăлара усă курнă хыççăн вараланчăк шыва тасатассипе 39 сооружени ĕçлет. Анчах та вĕсенчен чылайăшĕн технологи кивелнине, эксплуатаци шайĕ пĕчĕккине пула кирлĕ пек тасатаймаççĕ. Çавна пула таса мар шыв юхан шывсене каять, вĕсене варалать.

**- Çĕр çийĕннине хирĕç пурнăçлакан мероприятисем пирки мĕн калама пултаратăр?**

- Ку ыйту чăнах та çивĕч тăрать. Çавал шывĕ çурхи ейӳ вăхăтĕнче Юртукасси ялне сиен кӳресрен «хăтартăмăр». Кӳкеç çывăхĕнчи Çĕньял çырми ишĕлнине вăхăтлăха чарма пултартăмăр, халĕ ĕçсем малалла пыраççĕ. Çавăн пекех Апаш, Шăнкас, Курак Чурачăк, Мамка ялĕсенчи пĕвесене юсассипе, реконструкцилессипе чылай ĕç туса ирттертĕмĕр.

**- Ростислав Васильевич, районта предприятисем тавралăха, атмосферăри сывлăша вараласси не чакарас тĕллевпе туса ирттерекен ĕçхĕл епле пырать-ха?**

- Çут çанталăк законодательствине мĕнлерех пăхăннине палăртас тĕллевпе район территорийĕнче автозаправкăсенче, предприятисенче тĕрĕслевсем ирттертĕмĕр. Асăрханă çитменлĕхсене пĕтерме вăхăт кăтартса 32 предприяти ертӳçисене предписани пама тиврĕ. Иртнĕ çул сывлăша сиенлĕ япаласемпе вараласси 5200 тоннăпа танлашрĕ. Уйрăмах кунта газ уçлакан станцисем, асфальтпа бетон завочĕ, чăх-чĕп фабрикисен пайĕ пысăк пулнине палăртнă. Атмосферăна вараланинче автомобиль транспорчĕн тӳпи те пур. Çут çанталăка вараланăшăн промышленноçпа ял хуçалăх предприятийĕсемпе тунă килĕшӳсем тăрăх, кассăна 1 миллион та 684 пин тенкĕ укçа кĕнĕ.

**- Районăн экологи ларутăрăвне лайăхлатас ĕçри йывăрлăхсене асăнса хăварсан та аванччĕ.**

- Çаплах. Каларăмăр ĕнтĕ, атмосферăна автомашинăсен сĕрĕмĕ те сахал мар сиен кӳрет, уйрăмах Кӳкеç поселокне «чирлеттерет». Çавна май поселокран айккинче, çĕнĕ тавра çул тăвасси чи çивĕч ыйтусенчен пĕри. Атăлçи çул-йĕр управленийĕн ертӳçисем ку ĕçе 2006 çул пуçламăшĕнче тытăнма май пуррине пĕлтереççĕ. Унсăр пуçне - шывсене çителĕклĕ тасатса çитерейменни, хытă йышши йăла юлашкине çĕр айне тăвасси, çĕре шыв çини сиен кӳресрен сыхласси тата ытти проблема та.

**- Экологи пĕлĕвĕ парассине мĕнлерех йĕркелетĕр?**

- Кунта вĕрентӳ управленийĕпе тата библиотекăсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Шкул ачисем хушшинче экологи темипе тĕрлĕ конкурс-викторина, диспут ирттеретпĕр. Библиотекăри кĕнеке фондне çут çанталăкпа çыхăннă çĕнĕ литературăпа пуянлатсах тăратпăр. Иккĕмĕш çур çуллăха вăтăр экземпляр «Кладовая природы» хаçат çырăнса патăмăр.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❂ **Пирĕн тăрăхри кайăксем**

## ВĔСЕМ КУНТАХ ЮЛАÇÇĔ

**Çанталăк сивĕтрĕ. Вăрмантан вĕçсе килнĕ кăсăя кашни кун чӳрече умĕнче. Сăмсипе кантăкран шаккаса хĕл çитнине систерет. Чăнах та, ку вăхăтра вăрмансемпе ялсем тата хуласем таврашĕнче кăна хăш-пĕр йышши вĕçен кайăксене курма пулать, ыттисем пурте ăшă енне вĕçсе кайнă.**

**Кăсăя** çуркунне, ытти кайăк килсе çитме ĕлкĕриччен вăрмана кайса йăва йышăнать. Кĕркунне вара васкасах ялсемпе хуласем таврашне пурăнма куçать. Пĕр минут та тăп тăма пултараймасть, хăй килни çинчен çынсене асăрхаттарать. Этемпе хаваспах туслашать, апат парасса кĕтсех тăрать. Анчах выçă чух вăйне çухатать вăл, шартлама сивĕре вара шăнса вилме те пултарать. Эппин, кăсăясене кашни кунах пĕр вăхăтра апат памалла. Вăл шăн çу ытларах кăмăллать.

Юр çăвас умĕн ялхула таврашне **уйăпсемпе** пĕрле **тĕпек пуçлă кайăксем** вĕçсе килеççĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра вăрмансенче пурăннă. Хăш-пĕр çĕрте тĕпек пуçлă кайăка шăхлич кайăк теççĕ. Шăхăрнă евĕр сасă кăларать вăл. Çуллахи вăхăтра вăрăмтунасене, шăна-пăвана, шăрчăксемпе ытти хурт-кăпшанкăна тытса тăранса пурăнать. Кĕр кунĕсем пуçлансан вăл вăл кăнтăр енне куçма тытăнать, çула май тĕрлĕ йышши çырла пуçтарса çиет. Ытларах пилеше кăмăллать, йыт çĕмĕртне, катăркаса, уртăша, шăлан çырлине те тиркесе тăмасть.

Тĕпек пуçлă кайăксемпе танлаштарсан, уйăпсем пилеш вăррине кăларса çиеççĕ. Вĕсем пырса ларнă йывăçсем айĕнче хĕпхĕрлĕ пилеш выртнине асăрхама пулать. Мĕншĕн çав териех иртĕхеççĕ-ха кăсăясем? Çимĕçсене тытса пăхсан, пилеш çырлин вăрри çуккине асăрхама пулать. Уйăп пăрахса хăварнă пилеш çырлисене хăш чухне тĕпек пуçлă кайăксем пуçтарса çиеççĕ. Уйăпăн юрри флейта каланă пек салху, анчах хитре янăрать.

Тепĕр кайăксем хĕл каçма вăрмансене юлаççĕ. Ун пеккисен шутне **улатакка, кедр кайăкĕ** тата ыттисем кĕреççĕ. Улатакка хĕлле те йывăç вуллине таккама пăрахмасть. Хырпа чăрăш вăрманĕсенче вĕсем йĕкел шĕкĕлчеççĕ, хăвăл йывăççенваррине кĕрсе юлнă кăткăсемпе хурт-кăпшанкăна тытса çиеççĕ.

Ялсемпе хуласем таврашĕнче **ула кураксем, чанасем, чакаксем, çерçисем** тата **кăвакарчăнсем** йышлă пурăнаççĕ.

**В.МОСКОВКИН, çут çанталăка юратакан.**



**Кашни çулах кĕркуннепе çуркунне вуншар-çĕршер йывăç лартса хăвараççĕ çут çанталăк тусĕсем. Çак ĕçрен «ЧувашАгроМаркет» акционерсен хупă обществи те юлмасть. «Чувашсельлес» ФПУн филиалĕ - «Шупашкар сельлесхозĕ» учреждени йывăç лартма ял хуçалăх предприятийĕсене йывăç-тĕм туянса парать. Çӳлерех асăннă предприяти çав майпа усă курма тăрăшать. Ку тĕлĕшпе унăн тĕп агрономĕн Г.И.Сидоровăн та тӳпи пур.**

❂ **Г.И.Сидоров.**

## ТĂРАНТАРМА АН ӲРКЕНĔР

**Кайăксемшĕн хĕл чи йывăр вăхăт. Çунатлă туссенчен чылайăшĕ ăшă енне вĕçсе каять. Çапах та пирĕн патра та самай юлаççĕ: 40 ытла тĕрлине асăрхама пулать. Сивĕ хĕл кунĕнче те хăйсене валли апат тупса пурăнма ăс çитереççĕ пулин те, вĕсене çăмăл мар. Çунатлă туссене пулăшма вара кашниех пултарать. Кăмăл кăна пултăр. Мĕнрен пуçламалла-ха? Сырăш çакнинчен. Унтан вара кашни кун апат хурса пама ӳркенмелле мар.**



А.ПЕТРОВА фото ӳкерчĕкĕ.

Сырăш çинче ытларах чух кăсăясене, салакайăксене, шăван кайăксене асăрхама пулать. Кăсăясем иленни çынсемшĕн те усăллă. Ку кайăк хурт-кăпшанкăпа çулла кăна мар, хĕлле те тăранса пурăнать. Уяр çанталăкра сырăш çинчен çывăхри йывăççем çине куçаççĕ, унти хут-кăпшанкăна пуçтараççĕ. Асăннă кайăксем тăранса пурăнакан яланхи вырăн тавралли йывăççем çинче хĕл каçипе сăтăрçăсем юлмаççĕ те. Пĕр вырăнта хĕл каçнă хыççăн кăсăясем çулла чĕпсене те çавăнта кăлараççĕ. Ун валли ятарлă йăвана маларахах çакса хумалла.

Кайăксене тăрантарма халех пуçламалла. Кăсăясем хĕлле ушкăн-ушкăнпа çӳреме кăмăллаççĕ. Ун пек чух вĕсене апат тупма та, тăшмана асăрхама та çăмăлтарах. Сырăша хăвăрт асăрхаççĕ, черетпе пĕрер вăрăшарăн илеççĕ.

Шăван кайăксем пĕрерĕн пырса апатланаççĕ. Вĕсем темиçе вăрă илсе юнашар йывăç çине вĕçсе кайса апатланма кăмăлларах параççĕ. Кăсăясем вăрăна ура лаппипе хĕстерсе варринчине кăларса илеççĕ пулсан, шăван кайăксем йывăç хуппи хушшине чиксе хурса тасатаççĕ. Апат çителĕклĕ пулсан, вĕсем ăна кайран валли тĕрлĕ шăтăка хурса хăвараççĕ.

Кайăксене тăрантарнă чух сырăша апатран татăк тытмалла мар. Ăна юр-çумăртан хупласан аван. Тата чӳречерен сăнама май пулсан лайăхрах. Чи ансат сырăш - 1,5-2 литр кĕрекен пластик кĕленче. Ăна айккинчен шăтарса чӳрече çывăхĕнчи йывăç çине çакса хумалла. Кăсăясем хĕвел çаврăнăш вăррине хаваспах çинипе пĕрлех арбуз, дыня, кантăр вăррине юратаççĕ. Тăварламан çуллă аша уйрăмах юратаççĕ. Сыр, какай, çăкăр тĕпренчĕкĕ те хĕллехи вăхăтра кайăксемшĕн чĕре сури.

Салакайăксем ушкăнпа вĕçсе пырса сырăша пушатса хăварнине асăрхама пулать. Ун пек ан хăтланччăр тесен çаврăнса тăракан сырăш çакма юрать. Салакайăксем унтан хăраççĕ, кăсăясем хăюллăнах пырса лараççĕ. Пылак шыв (сок) пулнă хут хутаçа çакса хурăр та - салакайăксем иртĕхеймĕç.

Сырăшăр çинче тĕрлĕ кайăка курас тесен апата пуянлатмалла. Çум курăк вăрри, пилешпе палан çырли парсан уйăп, çирĕктăрри, шăкăлчи те иленĕç. Апата ирсерен хума ан манăр. Сивĕ çанталăкра ытти чухнехинчен нумайтарах пулсан аван.





Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчĕкĕсем.

**Килес çула республика Президенчĕ Садсемпе парксен çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Этемпе çут çанталăк çыхăнăвĕ икĕ еншĕн те усăллă пуласси чи малтанах пирĕнтен, çынсенчен, килет. Район администрацийĕпе юнашар вырнаçнă çак сад та этем аллине кĕтнине пирĕн фотокорреспондент асăрханă та ӳкерсе илме шут тытнă.**

❂ **Паян кĕрхи садра.**

❂ **Чирлĕ вулă.**

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

(Малалли. Пуçламăшĕ 122-127-мĕш номерсенче.)

Галина ЦВЕТКОВА

# ÇӲППИ

Калав

Хĕр чухнехи тĕрĕллĕ шурă саппунне çакрĕ.

- Мĕскер? - кăшкăрса ячĕ хаяр сасăпа кăмака çинчи,- паратăп ак сана аçу патне! Кĕрт йытти сан вĕлтренӳн ашшĕ!

Татах тем те пĕр кăшкăрчĕ карчăк, анчах Çӳппи тек ăна итлесе тăмарĕ, Анюкăн аллипитне шывпа çуса тасатса çĕтĕк ал шăллипе шăлса типĕтрĕ, йывăç турапа тура кĕмен хăмăр кăтра çӳçне тураса якатрĕ. Пĕлтĕр мăнкунта çĕлесе пана хĕрлĕ çитсă кĕпине тăхăнтартрĕ. Чип-чипер пукане пулса тăчĕ хура питлĕ Анюкран. Лешĕ хăй çине ытараймасăр пăхса тăчĕ тĕкĕр витĕр. Хырăм выççине те манчĕ пĕр самантлăха. Амăшĕ ăна çавăтрĕ те пăлтăра илсе тухрĕ.

❂ ❂ ❂

- Кам ачи ку, ытармалла мар чипер,- тесе йăтрĕ пĕр ӳсĕр туй арăмĕ Анюка.- Кил-ха, сĕтел патнерех, канихвет парам,- тесе сĕтел çинчен пĕр ывăç конфет илсе тыттарчĕ.- Курăр-ха, Петĕрпе кин, мĕнле хитре хĕрача. Сирĕн те çавăн пеккиех пултăр,- терĕ вăл Анюк çине ахаль те ытараймасăр пăхса ларакан çамрăк мăшăра. Анюк вара никама та асăрхамарĕ, сĕтел тулли халиччен тутанса пăхма мар, куçпа та курман апат-çимĕç тыткăнларĕ ăна, тĕрлĕ-тĕрлĕ ырă шăршă сăмсине кăтăкларĕ. Хĕрачан ăшĕ пăтранса килчĕ, пуçĕ çавăрăнса кайрĕ.

- Ме сана пĕремĕк, мĕн ятлă-ха эсĕ?- ыйтрĕ чашăкри пĕр пысăк пĕремĕкне Анюка тыттарнă май Петĕр.

- Мĕн ятлă тетĕн?! - Анюка пырса йăтрĕ Çӳппи.- Хăвăн ачун ятне те пĕлместĕн апла?

- Марш!!! - кăшкăрса ячĕ хĕрлĕ кăшман пек хĕрелсе кайнă Петĕр.- Атте! Кăларса çапăр кунтан çак юххана, çĕр çынпа выртса çӳрет те ачине манран тесе тăрать тата.

- Намăссăр! Кĕççе пит!- сĕрлет туй халăхĕ.- Марш!!!

Çӳппипе Анюка алăкăн-тĕпелĕн кăларса çапрĕç пӳртрен. Мĕскĕн хĕрарăм çул варринчи тусан çинех чикеленсе кайса ӳкрĕ. Унтан, туй курма пынă халăх хăйсенчен варĕсене тытсах ахăлтатса кулнине тӳсеймесĕр, хăвăрт çĕкленчĕ, хăйпе юнашар ӳкнĕ Анюка сĕтĕрсе тăратрĕ те уялла тан-кăштарса илсе кайрĕ.

❂ ❂ ❂

**Пусси-пусси ыраш пусси**
**Чух çилпелех хумханать...**
**(Халăх юрри)**

**Ан шăт курăк çул çине,**
**Ан шăт курăк çул çине,**
**Çавах çерем пулас çук,**
**Çавах çерем пулас çук.**
**Ан шухăшла çамрăк пуç,**
**Ан шухăшла çамрăк пуç,**
**Çавах телей курас çук,**
**Çавах телей курас çук.**
**(Халăх юрри)**

- Анне, ан вĕлер-ха мана-а! Анне, тархасшăн, ан вĕлер-ха мана-а!- тапăлтатать çылăхсăр чун, амăшĕн кĕпе аркинчен пĕчĕк аллисемпе çатăрласа ярса тытнăскер.- Эп тек нихăçан та çимелли ыйтмăп санран, ыйткаласа çӳресе сана хăвна çăкăр тупса çитерĕп.

- Ха-ха-ха-ха!- кăшкăрса кулать çын курсан хăсса ямалла нĕрсĕр хĕрарăм.

- Ха-ха-ха-ха!- пырса çапăнать ĕçке ернĕ çапкаланчăкăн ӳсĕр кулли ĕмĕрхи хура вăрмана.

- Ха-ха-ха-ха!- юхать çĕтĕк-çурăк мĕскĕн ыйткалаканăн айăплă кулли таса уй çийĕн.

- Ха-ха-ха-ха!- янăраса чупать чĕресĕр чун иллин тискер кулли тарăн варсемпе тип çырмасем тăрăх.

- Вил! Пĕт! Çухал куç умĕнчен, вĕлтрен кайăк! Кама кирлĕ эсĕ, тăван аçуна та кирлĕмарскер? Тăван аннӳне сирсе сирĕлми намăс парнеленĕскер? Тĕне кĕртнĕ чухне те алтаре кĕртмен сана пачăшкă. Мĕншĕн тесен - хĕрача. Хĕрарăм çĕр çине çуралассах питĕ çылăхлă çуралать тет. Çавăнпа пире Турă ĕмĕр тăршшĕпех арçын ури айĕнче асапланмалла тунă. Арçын кусĕнчен выçă йытăлла пăхмалла тунă.

- Вил! Пĕт, пĕчĕк хĕрĕм! Çак çылăхлă çĕр çинче эсĕ пĕрех телейлĕ пулас çук. Тепĕр вунăвунпилĕк çул иртсен эсĕ те эпĕ хамăн аннене каланă пек: «Мĕншĕн çуратнă эсĕ мана, аннесĕм, çуратман пулсан эпĕ асап, намăс мĕн иккенне те пĕлес çукчĕ, ирĕн-каçăн çынран вăрттăн вĕри куççуль юхтарса хĕрлĕ сăнăма шуратас çукчĕ, хам çине хам алă хума вăй çитереймесĕр канăçсăрланас çукчĕ, санăн ятна ял тăрăх ярас çукчĕ»,- тейĕн... Вил! Пĕт! Пĕчĕк хĕрĕм. Çавах пĕччен ӳстереес çук эпĕ сана... Каçар...

Куç пек тăрă, пăр пек сивĕ çăл шывĕнчен хăтăлса тухас тесе, мĕн пур вăйран тапаланнипе халтан кайнă, хăранипе тата шăнса кӳтнипе калаçайми пулнă хăмăр кăтра çӳçлĕ, çĕмĕрт хура куçлă хĕрачан пĕчĕк аллисем амăшĕн кĕпе аркинчен вĕçерĕнчĕç те, телейсĕр чун пĕр-пĕринпе çыхăнтарнă хĕрĕх тилхепе вĕçне чул çыхса ярса та тĕпне çитерейменн, хĕлле те пăр илмен шыва вăраххăн путса анса кайрĕ. Вăраххăн. Пĕр сас-чӳсĕр.

❂ ❂ ❂

Çӳппие тепĕр куннех ухмаххисен çуртне ăсатрĕç. Амăшне - ваттисен çуртне. Анюка, тĕне кĕртмен тесе, таса уйрах, хăй путса вилнĕ çăл çумĕнчех тирпейлесе пытарчĕç. Пушанса юлнă çуртăн чӳречисене хăмасемпе хĕреслетсе çапрĕç.

Петĕр туйĕ виçĕ кун кĕрлерĕ.

❂ ❂ ❂

Çӳппи бригадир кантăкран шакканă сасса илтсен шартах сиксе вăранчĕ.

- Эсĕ мĕн, урай хăмисемпе вут хутмастăн пуль те?- ик пĕççине шарт! çапрĕ бригадир, ирĕлнĕ чӳрече витĕр «çăварне кара пуçланă» урайне курсан.

- Ийя çав. Шăнса вилес килмест-çке...

- Да-а-а!..- ассăн сывларĕ бригадир.- Вăт тамаша-а-а.

- Паян ăçта каймалла?- ним пулман пекех ыйтрĕ Çӳппи.

- Паян колхоз çывăхри вăрман хуçалăхĕнчен вут турттарать, пенсионерсем валли. Çавăнта ярас пуль эппин сана. Хăвна валли те тиесе килĕн.

- Ан тĕлĕнтер,- хĕпĕртесе ӳкрĕ çакна кĕтмен Çӳппи,- эпĕ пенсионер мар вĕт-ха?

- Правлени ларăвĕнче сӳтсе явнă сан пирки. Эпĕ сĕннипе. Илтетĕн-и? Малашне сана та пенсионерсене панă пек вут пара пуçлĕç.

- И-и! Кай,кай,кай. Ман тĕле те ырă çын пур-çке вăл. И-и-и! Спассипах. Ара, кĕр пӳрте, кантăк витĕр калаçас мар.

(Малалли пулать.)

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

Уважаемые выпускники Синьял-Покровской школы! Приглашаем вас на Торжество, посвященное столетнему юбилею школы, которое состоится 6 ноября 2004 года в 10 часов. Сельская администрация, дирекция школы.

Толиковская с|а объявляет торги на строительство водонапорной башни и водопровода в д. Толиково.

Утерянное свидетельство о праве на льготы № 357835 считать недействительным.

Куплю живым весом бычков, коров, телок. Тел.: 8-903-389-30-36.

Продаю шифер, цемент, сруб, мох, керамблок с доставкой и без выходных (Ишлеи). Тел.: 3-15-85.

***Муниципальное унитарное предприятие Чебоксарского района «Дирекция единого заказчика жилищно-коммунального хозяйства»*** сообщает, что конкурс по отбору предприятий и организаций на выполнение муниципального заказа на 2004 год: на капитальный ремонт трубопроводов ГВС и отопления внутриквартальных сетей жилых домов № 1, 1а по ул.Зеленая д.Тренькасы Чебоксарского района Чувашской Республики, на капитальный ремонт трубопроводов отопления внутриквартальных сетей жилых домов № 11 по ул. Спутника и № 84 по ул.Советская с.Ишлеи и на газоснабжение 12 квартирного жилого дома по ул.Совхозная с.Ишлеи Чебоксарского района, обăявленный в газете «Тăван Ен» от 23 октября 2004 года № 123-124, **отменяется.**

# Ăшшăн саламлатпăр



Куснар ялĕнче пурăнакан, «Чăваш бройлерĕ» чăх-чĕп фабрикинче вăй хуракан юратнă çыннăмăра - мăшăра, аттене, кукаçине, çывăх тăвана - Владимир Викторович МИХАЙЛОВА 55 çулхи юбилейпе ăшшăн саламлатпăр. Телейпе ыр кун çул, кĕрхи тулăх пурнăç сунатпăр.

Çулсем иртеççĕ сисĕнмесĕр,
Аттеçĕм, уншăн ан кулян.
Ыр кăмăлушăн тав тăватпăр,
Пулсамччĕ пирĕнпе ялан.

МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔСЕМПЕ ХĔРĔСЕМ, КЕРӲШĔ, МĂНУКĔСЕМ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.

# МУП ЧЕБОКСАРСКОГО РАЙОНА «ДЕЗ ЖКХ»

**объявляет конкурс по отбору предприятий и организаций на выполнение работ по обслуживанию внутридомовых газовых сетей, газоиспользующего оборудования и приборов общего пользования муниципальных домов, находящихся на балансе МУП Чебоксарского района «ДЕЗ ЖКХ».**

***Участник конкурса:***

- должен иметь необходимые профессиональные знания и квалификацию, финансовые средства, оборудование и другие материальные возможности для выполнения работ, опыт и положительную репутацию;
- должен быть платежеспособным, не находиться в процессе ликвидации (для юридического лица);
- не может являться организацией, на имущество которой наложен арест и (или) экономическая деятельность которой приостановлена.

**Документы на участие в конкурсе принимаются в запечатанном конверте до 08 часов 00 минут 20 декабря 2004 года комиссией по адресу: Чебоксарский район, п.Кугеси, ул.Советская, д.35 «А» (справки по телефонам: 8-240- 2-17-85, 2-17-81).**

**Конкурс проводится 20 декабря 2004 года в 14 часов 00 минут в помещении МУП Чебоксарского района «ДЕЗ ЖКХ».**

**УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ РАЙОНА!**

**ЧУВАШСКИЙ ФИЛИАЛ СВЯЗЬ-БАНКА СООБЩАЕТ ВАМ О ПРИЕМЕ ДЕНЕЖНЫХ ВКЛАДОВ ОТ ФИЗИЧЕСКИХ ЛИЦ ВО ВСЕХ ПОЧТОВЫХ ОТДЕЛЕНИЯХ ЧЕБОКСАРСКОГО РАЙОНА.**

Связь-Банк основан в мае 1991 года крупнейшими предприятиями связи, такими как Ростелеком, Связьинвест, Международный почтамт, Центральный телеграф и др. Банк имеет 29 филиалов по стране. Используя огромные возможности Почты России - сельские, районные, городские почтовые отделения связи - Банк имеет возможность приходить к каждому клиенту почти что в дом.

Чувашский региональный филиал Связь-Банка работает с февраля 1996 года. Среди постоянных клиентов его - почта и предприятия электросвязи Чебоксар, большое число коммерческих организаций, строительных и торговых предприятий. Филиал имеет значительное число вкладчиков - физических лиц, которые вот уже на протяжении восьми лет доверяют ему свои сбережения.

Сегодня, благодаря сотрудничеству Связь-Банка с Почтой России,

***Вы также имеете возможность получать доходы от денег, вложенных в банк, не выезжая в районный центр!***

Это прежде всего заслуга почтовых работников, которые осуществляют взаимосвязь с банком наряду с оказанием традиционных почтовых услуг.

Все условия по приему вкладов находятся в отделениях почтовой связи.

**СВЯЗЬ-БАНК - БАНК ВАШЕГО БУДУЩЕГО!**

Генеральная лицензия Банка России № 1470.

АЛЕКС Ч

**Частное охранное предприятие «АЛЕКС-Ч», лиц. № 25/21 от 05.10.04, выданная Ленинским РОВД г.Чебоксары предоставляет сл. услуги:**
**- охрана объектов;**
**- вооруж. сопровождение грузов.**
**Адрес: г.Чебоксары, ул. Ярославская, 76, оф. 201. Тел.: (8352) 62-29-38.**

РГУ «Кугесьский дом-интернат для престарелых и инвалидов» требуются на работу: повар; кухонный работник; швея-мотористка; санитарки; плотник; слесарь-сантехник; тракторист. Адрес: п. Кугеси, ул. Первомайская, д. 15. Т.: 2-12-71.

❂ ❂ ❂

Вăрман - Çĕктер ял администрацийĕ, Çӳлтикасси шкул коллективĕ Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ тата ĕç ветеранĕ, шкулта нумай çул директор пулса ĕçленĕ

**Гурий Васильевич РАЗУМОВ**

нумай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

❂ Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

## ÇАКĂН ПЕК ÇАНТАЛĂК ПУЛАТЬ

| Юн кун, ноябрĕн 3-мĕшĕ | Кĕçнерни кун, ноябрĕн 4-мĕшĕ | Эрне кун, ноябрĕн 5-мĕшĕ | Шăмат кун, ноябрĕн 6-мĕшĕ | Вырсарни кун, ноябрĕн 7-мĕшĕ |
|---|---|---|---|---|
| пĕлĕтлĕ, юр çăвать, кăнтăрла ...$0^0$ çĕрле ...$0^0$ | пĕлĕтлĕ, çумăрпа хутăш юр çăвать, кăнтăрла $0^0$...$+2^0$ çĕрле $0^0$...-2 | улшăнса тăракан çанталăк, çумăр, юр çăвать, кăнтăрла $0^0$...$+2^0$ çĕрле $-1^0$...$-6^0$ | улшăнса тăракан çанталăк, çумăр çумасть, кăнтăрла $-3^0$...$-5^0$ çĕрле $-6^0$...$-8^0$ | улшăнса тăракан çанталăк, çумăр çумасть, кăнтăрла $-6^0$...$-8^0$ çĕрле $-8^0$...$-10^0$ |

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП “Кугесьский издательский дом”, Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел.Ĕфакс: (8240) 2-13-83. E-mail: prinĕ@chebs.cap.ru

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.А.Петрова

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 02.11.2004 г. в 16 час. 00 мин.
Заказ № 1766. Тираж 1635.
Индекс газеты - 54820.